Районта ирттернĕ комплекслă тĕрĕслев мĕн кăтартса пачĕ-ха?

Хăрушсăрлăх ыйтăвне малта тытмалла

Иртнĕ эрнере Раççей Федерацийĕн Гражданла оборона, чрезвычайлă лару-тăрава асăрхаттарас тата пĕтерес министерствăн Чăваш Республикинчи Тĕп управленийĕ пирĕн районти гражданла оборона тытăмĕн

В. Петьков тĕл пулу ирттерет.

территори пунктне чрезвычайлă лару-тăрава асăрхаттарас тата пĕтерес, пушар хăрушсăрлăхĕпе тивĕçтерес, шыв объекчĕсенче çынсен хăрушсăрлăхне сыхлас тĕлĕшпе ирттернĕ комплекслă тĕрĕслеве вĕçлерĕ. Мĕн уçса пачĕ-ха вăл пире? Эпир хамăра хăрушсăрлăхра туятпăр-и?

ВУТ-ÇУЛĂМ КЎРЕКЕН ИНКЕК

Пушар хăрушлăхĕ паянхи пулăм мар. Çавăнпа та ун çине çиелтен пăхакансемпе килĕшме çук, килĕшес те килмест.

1994 çулта «Пушар хăрушсăрлăхĕ çинчен» Федераллă Саккун вăя кĕчĕ. Унта палăртнă тăрăх пушар хуралĕн тĕп задачисем пушар тухассинчен сыхланассине йĕркелесси тата «хĕрлĕ автансене» сўнтересси. Çак ĕç пирĕнтен кашнинех пырса тивет. Пушар хăрушсăрлăхне кун йĕркинче тытас ыйту ял тăрăхĕсен чиккинче вырăнти самоуправлени органĕсен нормативлă акчĕсемпе пулса пырать. Кунта пушар хуралне тата унăн ĕçне йĕркелесси, халăха çак ĕçе яваçтарасси, халăха пушар хăрушсăрлăхĕпе паллаштарса тăрасси, пушарсене сўнтересси тата аварипе çăлав ĕçĕсене туса ирттересси кĕрет. Пурте куратпăр, пушар хăрушсăрлăхĕ хамăр алăра. Лăпкă пурнăçшăн пурсăмăр та пĕрле яваплă пулса тăратпăр. Хальлĕхе вара... Кăçал утă уйăхĕн 16-мĕшĕ тĕлне районта 12 пушар пулчĕ. Вĕсенче 1 çын пурнăçĕ вăхăтсăр татăлчĕ. Таннистерствин Чăваш Республикинчи патшалăх пушар надзор управленийĕн ертўçи А. Дергунов районти пушар хăрушсăрлăхĕпе паллаштарни çине хурав панă май районти пĕтĕмĕшле лару-тăрава «вăтам» хак парса.

Пушар машинисене юсавлă тытса пăхса тăрассипе çителĕклĕ ĕçлетпĕр-и? Миçе юхан шыв патне паян пушар машини шыв илме хăюллăн пырайрать? Ял хуралĕсем тăратасси мĕншĕн уксахлать? Районта пушар тухаслăхпа лару-тăру ырă енне улшăннă пулсан та çак ыйтусем кун йĕркинчен тухса

А. Дергунов, С. Митрофанов, М. Пушкин, И. Смирнов лару-тăрава сўтсе яваççĕ.

ўкмеççĕ-ха.

ШЫВĂН ТУРАТТИ ÇУК

– Хăйĕн хăрушсăрлăхĕ пирки шухăшлакан çын ыттисен хăрушлăхĕ çинчен те тимлĕхе вĕçертмест, – терĕç пĕтĕмлетў канашлăвне пухăннисене РФ Чрезвычайлă лару-тăру министерствин Чăваш Республикинчи шыв çинчи хăрушсăрлăх инспекцийĕн инспекторĕсем Дмитрий Кузьминпа Юлия Вязанова.

Оперативлă кăтартусемпе республикăри шывсем çинче июлĕн 16-мĕшĕ тĕлне 21 çын шыва кайса вилнĕ. Ку вăл пĕлтĕрхинчен чылай пысăкрах кăтарту. Пирĕн районта та ку тĕлĕшпе ўкерчĕк пăшăрхануллă. Çулталăк пуçланнăранпа Муркаш енре 6 çын шыва кайса пурнăçран уйăрăлнă тата район территоринче шывра вилнĕ çынсен 3 кĕлеткине тупнă. Юлашки тĕслĕхсемпе шалти ĕçсен пайĕ ĕçлет. Çакна та палăрмалла, шыва путнă çынсенчен кашниех шыва кĕме ўсĕрле пыни паллă. Куртан вара пĕтĕмлетĕвне хăвăр тăвăр.

Шыв ыйтăвне пуçласан пысăк çитменлĕх вăл ялсенче ял тăрăхĕсем шыва кĕмелли ятарлă вырăнсем хатĕрлеменни. Çынсем шыва кĕнĕ вырăнсенче ял тăрăхĕсенчи йышăнупа ответлă çынсенчен дежурствăсем йĕркелеменни. Шыва кĕрекенсем пĕве-кўлĕ хĕрне ўсĕр пуçпа пыни тата суя хăюлăх кăтартса пĕлмен вырăнсенче шыва кĕни те пĕтĕмĕшле ўкерчĕке ырă енне çавăрмасть.

Шыва кĕрекеншĕн тĕп правилăсем çаксем:

– Ишме пĕлмесĕр шыва ан кĕрĕр;

– Пĕлнĕ вырăнсенче тата шыва кĕме ирĕк панă çĕрте çеç шыва кĕрĕр;

– Шыв çаврăннă вырăнсенче, шлюзсемпе пристаньсенче, шыв курăкĕ нумай çĕрте шыва кĕресрен асăрханăр;

– Хĕвел çинче нумай пулнă, апатланнă хыççăн, ывăнсан шыва тўрех ан кĕрĕр;

– Ўсĕрле шыва ан кĕрĕр;

– Паллă мар вырăнсенче шыва кĕресрен асăрханăр;

– Ачасене шыва кĕме пĕччен ан ярăр;

– Аслатиллĕ çумăрта шыва ан кĕрĕр.

Çак правилăсене пăхăнсан шыва кĕрсе уçăласси кашниншĕнех илемлĕ самант пулĕ.

А. БЕЛОВ.
Автор сăн ўкерчĕкĕсем.

Килти хушма хуçалăх

Тухăç мĕнрен килет?

Пахчара çитĕнекен çĕр улми питĕ вĕтĕ пулма пуçларĕ. Кунсăр пуçне нумайăшĕ «ачаллă». Çак çимĕçĕн тухăçĕ мĕнрен килет? Тен, ун валли тăпри урăх кирлĕ?

Ю. ПЕТРОВ.

Кунашкал ыйтусем ял çыннисем умĕнче час-часах çураласçĕ. Кашни ыйтăвăн хăйĕн сăлтавĕ. Ку ыйту çине хуравласа çапла калас килет. Тымар çимĕç валли пулăхлă та кăпăшка тăпраллă çĕр кирлĕ. Кунпа пĕрлех çĕр ĕçченĕ пусă çаврăнăшне пăхăнни, им-çампа вăхăтра усă курса сăтăрçăсемпе тата çум курăкĕпе кĕрешни пысăк пĕлтерĕшлĕ. Хăшĕпĕри тăпра пахалăхне лайăхлатас, çĕнетес тесе çĕр улми туса илес лаптăк çине малтан шурă пăрăç (горчица), кĕрхи рапс, кашкăр пăрçи (люпин) акаççĕ. Хăяр, кишĕр, кавăн, мăн хăяр (кабачок) çитĕнтерсен те пулас çĕр улмишĕн аван. Çимĕç вĕтĕ пулни вара вăрлăх пахалăхĕнчен нумай килет. Çавна май çуркунне лайăх калчаланнă (яровизаци тунă) вăрлăх кăна лартмалла. Вăрлăх пирки вара кĕр кунĕсенчех шутламалла тата хатĕрлемелле. Çĕр улми вăрлăхне улăштарма та манмалла мар. Сăмахран, кўршĕсемпе ылмаштармалла е ăратлă çĕр улми туса илекен хуçалăхсенчен туянмалла. Çак сĕнўсене шута илсен пахчари тымар çимĕç тухăçĕ самаях ўсме кирлĕ.

Çулçи те, тымарĕ те паха

Пĕлĕшсем сĕннипе кăçал пахчара барбарис лартрăм. Пĕлес килет, унпа сиплев ĕçĕнче усă курма пулать-ши?

Е. САПТЕЕВА.

Вулакан шухăшне ăнланатăп. Пахчари кашни ўсен-тăранах сывлăхшăн усăллă. Вĕсемпе усă курма çеç пĕлмелле. Барбарис та вĕсен йышнех кĕрет. Барбарис – 1,5-3 метр çити ўсекен, ăшша тата çутта юратакан тĕм. Унăн тымарĕ вăйлă аталанать пулсан та, хăй вăрах ўсет. Анчах вăл сиплĕ ўсентăран шутланать. Сиплев ĕçĕнче ытларах тымарĕпе тата çулçипе усă кураççĕ. Барбарисăн çулçисенче С тата Е йышши витаминсем, пан улми тата лимон йўçекĕ пур. Тымарĕ вара барберин текен хутăшпа пуян, вăл паха та питĕ витĕмлĕ эмел тума каять. Çак эмел пĕвер чирĕ аптратсан, ват хăмпинче чул пухăнсан ăнăçлă сиплет.

Çырла тимлĕх ыйтать

Хăмла çырли çимĕçĕ вĕтелсе кайрĕ. Ун çинче вĕтĕ хуртсем курăнма пуçларĕç. Мĕн тумалла-ши?

В. ИШАКОВ.

Куншăн тĕлĕнме те, кулянма та кирлĕ мар. Çакă сирĕн хăмла çырлине хĕвел çути лайăх ўкекен вырăна куçармаллине систерекен паллă. Анчах хунавĕсене кивĕ лаптăкран ан илĕр. Унсăрăн вĕсемпе чир-чĕр те куçма пултарать. Çĕнĕ вырăна çамрăк та вăйлă хунавсем лартмалла. Хăмла çырли хурăн çырлипе кўршĕллĕ пулмалла мар. Вĕсен сăтăрçисем пĕрре.

Лартмалли лаптăка тĕплĕн хатĕрлемелле: лайăх кăпкалатмалла та минераллă удобренисем, çĕрĕк тăпри хывмалла, шăвармалла, хунавсене 30-40 см кĕскетсе лартмалла. Сортне те шута илмелле. Ир пулаканнисенчен «Журавлик», «Ранний сюрприз», вăтам тата каярах пулаканнисенчен «Самарская плотная», «Награда», «Гусар» сортсем лайăх.

А. СЕМЕНОВ,
«Россельхозцентр» ФГУн Чăваш Республикинчи филиалĕн Муркаш районĕнчи уйрăмĕн тĕп специалисчĕ.

ХЫÇ СĂМАХ. Килти хушма хуçалăхсенче сиксе тухакан ыйтусем çине Муркашра вырнаçнă «Россельхозцентрта» тулли хурав илме пулать. Пирĕнпе çыхăнмалли телефон – 2-12-77.

Хĕле хатĕрленсе – варени



Хурăн çырлинчен. 400 грамм хурăн çырли, сироп: 400 грамм сахăра – 1,5 стакан шыв.

Хурăн çырлине сарлака савăта сарса хумалла та вĕри сироп ямалла. Çиелтен марльăпа е шурă татăкпа витсе талăк лартмалла. Унтан çырлана пĕçермелли савăта асăрханса ярса вĕреме кĕртмелле. Çулăм çинчен илсе пĕр сехет сивĕтмелле те каллех вĕреме кĕртмелле.

Шăтăклă çăпалапа çырлана савăта куçармалла та сиропне çăраличчен вĕретмелле. Пĕçернĕ сиропа çырла çине ямалла.

Тепĕр кунне каллех çырлана вĕретме кĕртмелле, çырлана тепĕр савăта куçармалла та сиропне çăраличчен вĕретмелле. Çырлана сироппа хутăштармалла, вĕреме кĕрсен стерилизациленĕ банкăсене тултармалла.

Çĕр çырлинчен. 2 кг çырла, 1-1,5 кг сахăр, 1 лимон.

Çырлана сахăрпа сапса çĕр каçма лартмалла. Ирхине лимон сĕткенне çырлапа пăчăртаса юхтармалла та çулăм çинче лартмалла. Вĕреме кĕртмелле, 5 минут вĕретмелле те çулăм çинчен илмелле. Кăштах сивĕтмелле, сиропне сăрăхтарса çăраличчен пĕçермелле. Варение сивĕре упрасан аванрах.

А. БЕЛОВ сăн ўкерчĕкĕ.

Кўршĕсенчен вĕренмелле

Ялта та пляж пур

Хĕрлĕ Чутай районĕнчи шыв хĕрринче канма юратакансем халĕ вырăнтах хăйăр çинче хĕртĕнме пултараççĕ. Мучикасси плотини çинче Тралькасси ял тăрăхĕн администрацийĕ тата вырăнти культура ĕçченĕсем çине тăнипе чаплă пляж уçнă.

Кунти плотинана 80-мĕш çулсенчех туса лартнă. Вăл çывăхри ялсенче пурăнакансемшĕн юратнă кану вырăнĕ пулса тăнă: хитре тавралăх, таса шывпа сывлăш. Çапла вара вырăнти влаç кунта пляж уçма шутлать. Ĕçе хастарăн тытăнаççĕ. Шыва кĕме юракан вырăна буйсемпе паллă тăваççĕ. Тасатнă çырана вуншар машина хăйăр кўрсе килеççĕ. Юнашарах волейбол площадки вырнаçтараççĕ. Беседка тăваççĕ. Çўп-çап валли контейнерсем лартаççĕ.

Ялти пляж пирки сăмах таврана хăвăрт сарăлать. Халĕ кунта халăх ялан йышлă. Хуларан та, район центрĕнчен те, çывăхри ялсенчен те килеççĕ.

«Советская Чувашия» хаçатран.

Сăмах – сывлăх хуралçине

Купăста – усăллă пахча çимĕç

Улма-çырла, пахча çимĕç культурисемсĕр сĕтел тулăх пулаймасть. Çакна шута илсе çу кунĕсенче кашниех вăл культурăсене ытлă-çитлĕ хатĕрлеме тăрăшать.

Кашни пахча çимĕçпе улмаçырла пĕр-пĕрин хушшинче хăйсен уйрăмлăхĕсемпе палăрса тăрать. Çав шутра тĕрлĕ витаминсемпе, организма тĕрĕс-тĕкел аталанма кунсерен кирлĕ нумай минераллă япаласемпе. Вĕсем вара пире кашниех кирлĕ.

Чарăнар-ха купăста çинче. Купăста уйрăмлăхĕнче – вархырăмри язва чирĕнчен, гастритран усăллă витаминсем нумайăн. Тепĕр уйрăмлăхĕ – чылай хушă упранакан С витамин нумайăн. С витамин купăстара 7-8 уйăх таран упранайрать. Урăх пĕр пахча çимĕçрен те С витаминăн унашкал управĕ çук. Ку вăл купăстари химилле çыхăнусене пула. Çак форма «асборбичен» ятлă. Хаклă витамин нўхрепре упранă чухне те, тăварланă май та сыхланса юлать. Купăстари С витамин пирĕн организма питĕ нумай пулăшу парать. Çирĕп организмра йўçтерекене (окислитель) чарса вăл рак клеткисене ура хурать, эмелсен сиенлĕ витĕмĕсене пĕтерет, стресс ирттерсе яма пулăшать. Купăстара пур аскорбинка нумай чирсене хирĕç тăма пулăшать, сосудсене тĕреклетет.

Унсăр пуçне купăста ытти витаминсемпе те пуян. РР витамин организмри япаласен ылмашăвне, В витамин нерв системине ĕçлеттерме тата çирĕплетме, К витамин юн чарма, каротин куç çивĕчлĕхне тивĕçлĕ шайра тытма пулăшать. Сахăр диабечĕпе чирлекенсене те ăнсăртран мар ĕнтĕ купăста çиме хушаççĕ.

Купăстари кали – чĕре мыщцисемшĕн чăн-чăн тĕкĕ. Çавăн пекех асăннă пахча çимĕçре вар-хырăма лайăх ĕçлеттерекен япаласем пур.

Купăстан сокĕ те чăн-чăн сиплевçĕ. Вăл вар-хырăм чирĕсемпе кĕрешес ĕçре малти вырăнта.

Халĕ каланине шута илсе район çыннисем купăста çине тимлĕрех те юратсарах пăхĕç тесе шутлатăп.

Г. ЕЛЬКИНА,
Çĕнĕ Шупашкарти гигиенăпа эпидемиологин Муркаш районĕнчи пай заведующийĕ.